## Юрă-кěвěсен пуçламăшě

*Исаак Дунаевскипе тěл пулнисем*

Манăн юлташ Сергей Булатов, Мускав консерваторийěнче пěрле вěреннěскер, вăрçă хыççăнхи çулсенче Музгизра хор литературин редакторěнче ěçлетчě. 1948 çулта республикăри композиторсен Союзěн ěçěсемпе Мускавра пултăм. Эпě тăвата сасăпа юрлама кěвěленě «Çамрăксен юррине» юлташăма кăтартса пăхрăм. Юрă редактора чăннипех килěшрě. Вăл ăна хăй патěнче хăварма ыйтрě. Çавăнтах тата çапла хушса хучě:

— Эпě санăн пěччен юрламалли юрăсем пуррине те пěлетěп. Ытлашши вăхăт ирттермесěрех вěсене те илсе кил, — терě.

Исаак Осипович (редсовет председателě) нациллě композиторсен творчествипе уйрăмах хытă интересленни çинчен пěлтерчě вăл ун чухне. Эпě ăна хамăр республикăри юрă-кěвě ăстисем пирки кěскен каласа кăтартрăм. Пěр-пěринпе ăшшăн уйрăлтăмăр.

1949 çулта каллех Мускаври композиторсен Союзěнче пулма тӳр килчě. Эпě редсовета кăтартса пăхас шутпа хампа пěрле виçě юрă илсе кайнăччě. Неглинкăри Музгиза кěтěм. Вăл кун хăйсен произведенийěсене кăтартма пынă композиторсем пит йышлах марччě. Манăн та черет çитрě. Сергей Булатов мана Исаак Осиповичпа паллаштарчě. Унтах издательствăн вокалпа хор литератури кăларакан редакцин заведующийě, Мускав композиторě М.В. Иорданский те ларатчě. Хам илсе пынă юрăсем хушшинче «Хăна юрри», «Кӳлě хěрринче», «Телейлě туслăх» тата кăшт маларах Сергей Булатов патне хăварнă «Çамрăксен юрри» пурччě.

Редсовет ларăвě хыççăн мана тепěр хут чěнсе илчěç. Исаак Осипович ман алла тытса чăмăртарě те:

— Эпě чăваш музыкипе ку таранччен паллашайманччě-ха, — терě. — Халě ěнтě паллашрăм теме пултаратăп. Сирěн юррăрсем пире пурне те килěшрěç. Вěсем илемлě кěвěллě, юрлама меллě, унта наци колоричě уççăн палăрать.

Эпир виçĕ юррăра тата «Çамрăксен юрри» хора пичете сĕнме калаçса татăлтăмăр. Чĕререн сывлăх сунатăп, çĕнĕ юрăсем татах та çырма сĕнетĕп...

Эпĕ хама пĕлĕте çĕкленнĕнех туйрăм. Пӳлĕмрен мĕнле тухса кайнине те астумастăп. Çав тери савăнтăм, пăлхантăм. Пĕтĕм халăх юратнă композиторпа тĕл пултăм-çке-ха. Ку çеç те мар, вăл ман кĕвĕсене ырларĕ, творчествăра çĕнĕ ӳсĕмсем тума халалларĕ... Тӳррипех калатăп, çакна нихçан та, ниепле те манма çук.

Часах Мускавра юррăмсем пирвайхи хут пичетленсе тухрĕç. Сăввисене вырăсла куçарнăччĕ. Çапла, паллă вырăс композиторĕ Дунаевский мана музыкăра анлăрах утăмсем тума пулăшрĕ. Каярахпа та, Мускава композиторсен Союзĕн ларăвĕсене е пленумĕсене кайсан, эпĕ Исаак Дунаевскийпе тĕл пулаттăм. Кашнинчех эпир унпа музыка искусствине малалла анлăрах аталантарас тĕлĕшпе умра тăракан ыйтусене сӳтсе яваттăмăр.

*«Çĕршывăм, савăн» юрă çурални*

Тăватă сасăпа юрламалли «Çамрăксен юррине» эпĕ 1940-мĕш çултах çырма пуçланăччĕ. Ун чухне Мускаври консерваторире вĕренеттĕм. Вăрçă кансĕрлерĕ, юрра вĕçне çитерейменĕм. Эпĕ ăна консерваторирен вĕренсе тухсан, Шупашкара таврăнсан тин, çырса пĕтертĕм. Ансамбльпе юрлама вĕрентĕмĕр, нумай концертсенче юрларăмăр, Чăвашрадиопа та вăл пĕрре мар янăрарĕ. Юрă çамрăксене уйрăмах килĕшрĕ, часах халăх хушшинче анлăн сарăлчĕ.

Ĕнтĕ 50 çул сыратăп юрă-кĕвĕ. Вĕсен шучĕ çич çĕртен те иртсе кайрĕ. Анчах паян та вăл — маншăн чи юратнă юррăмсенчен пĕри.

Çавăн пек чуна илĕртекен, ялкăшса, çĕкленсе янăракан, çамрăксене килĕшекен çĕкленӳллĕ çĕнĕ кĕвĕ тупасси куллен шухăшлаттаратчĕ.

1955 çулта Николай Сандров поэт хăйĕн пĕр сăввине вулаттарчĕ. Вăл питех те килĕшрĕ. Лайăх сăвă ман ума йывăр задача кăларса тăратрĕ. Вĕресе тăракан чун-чĕреллĕ çамрăклăх сăнарне уçса паракан кĕвĕ тупмалла-çке. Унта совет çамрăкĕсен хастарлăхĕ, çиçĕмлĕ хăвăрт утти, ырă ĕмĕт-шухăшĕ сисĕнсе тăтăр. Çу кунĕсем вĕçленсе пыратчĕç. Эпĕ кĕвĕсем ĕнерсе Атăл хĕрринелле утрăм. Кĕтмен çĕртен Юрий Илюхина тĕл пултăм. Ун чухне вăл Хусанти консерваторире вĕренетчĕ.

— Филипп Миронович, — терĕ хайхискер, — эпĕ нумай пулмасть Тутар республикинчи чăвашсем патĕнче пултăм, халăх юррисем çырса илтĕм. Ман шутпа, унта сахал мар илемлĕ кĕвĕсем пур. Вĕсенчен пĕри уйрăмах сире килĕшес пек туйăнать. Тен, питех те аван юрă пулса тухĕ...

Чăнах та, кĕввисем сăнарлă кĕвĕллĕччĕ, янăравлăх енчен те пуянччĕ. Юрий Илюхин палăртнă юрă чăннипех интереслентерчĕ. Кĕвви çĕкленӳллĕ, ритмĕ çирĕп шăнăрлă. Тен, унта тутар халăх кĕввисен витĕмĕ те палăратчĕ-и? Çапла вара, эпĕ пĕр иккĕленмесĕрех юрăри хăш-пĕр интонацисене хам музыкăна кĕртме шутларăм. Вĕсем хушса юрламалли пулса тăчĕç:

Эй, яш-кĕрĕм, паттăр халăх, эй, ĕçлер-ха савăнмалăх...

Асăннă интонацисем юррăн хакне ӳстерме пулăшрĕç.

«Çĕршывăм, савăн» юрра чи малтан халăх умне илсе тухаканĕ Мефодий Иванович Денисов пулчĕ. Халĕ вăл, пĕлетĕр ĕнтĕ, — РСФСР тава тивĕçлĕ, Чăваш АССР халăх артисчĕ. Часах ăна ытти солистсем те хăйсен репертуарне кĕртрĕç, юрă, мăшăр çунат хушса, республикипех сарăлчĕ.

Унтанпа 25 çул иртрĕ. Юрă çав-çавах янăрать.

Тутар халăх юррин интонацийĕсемпе усă курса, юрра çĕнетни харама каймарĕ: вăл тутарсен тата пушкăртсен кăмăлне кайрĕ.

Юрра Ленинградри «Мелодия» фирма пластинка çине те çырса илчĕ.

Совет композиторĕсен юррисен активлă пропагандисчĕ Сергей Яковенко репертуарĕнче те пур çак юрă. Вăл ăна час-часах концертсенче юрлать. Сергей Яковенко Пĕтĕм Союзри эстрадăпа симфони оркестрĕпе пĕрле «Çĕршывăм, савăн» юрра пленка çине çырнă. Дирижерĕ — Юрий Силантьев. Çак пленка çĕршыври кашни радиокомитетра тенĕ пекех упранать.

### *«Хăмла пахчи» пирки темиçе сăмах*

Эпĕ час-часах республикăри районсене тухса çӳретĕп, ял ĕçченĕсемпе тĕл пулса калаçатăп, вĕсен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллашатăп. Утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче хăмлаçăсем патĕнче пулнăччĕ. Вĕсем хăйсем çинчен пĕр юрă та çукки çинчен ӳпкелешетчĕç. Çакă маншăн халăх заказĕ пекех туйăнчĕ. Çав çулсенчех Мефодий Иванович Денисов юрăçа СССР Верховнăй Совет депутатне суйланăччĕ. Вăл уйрăмах хăмла нумай туса илекен Сĕнтĕрвăрри тата Çĕрпӳ районĕсенчи суйлавçăсемпе тĕлпулусем ирттерчĕ. Пĕррехинче, Сĕнтĕрвăрринчен таврăннă хыççăн, вăл мана:

— Филипп Миронович, тĕлĕнмелле япала, мĕншĕн-ха хăмлаçăсене кӳрентеретĕн? — тесе алă пачĕ. — Вĕсен пархатарлă ĕçĕ çинчен пĕр юрă та çырман-çке эсĕ. Ăçта çитнĕ, унта çакăн çинчен асăрхаттараççĕ колхозсенче... Кун пирки сирĕнпе калаçса пăхас килчĕ.

Мĕн калăн, кăткăс ыйту. Шухăша кайрăм. Поэтсемпе канашласа пăхрăм. Часах Петр Ялкир поэт хăйĕн сăввине ярса пачĕ. Куплетсене калăпласа çитернĕ теме çукчĕ ĕнтĕ. Хушса юрламалли кăкăрта ăшă туйăм çуратрĕ:

Пахчи, пахчи,
Хăмла пахчи, —
Ытарма çук илемне.
Чăваш хăмли —
Чи хăватли,
Чапĕ кайрĕ инçене...

Тепĕр кун кĕтмен çĕртен Николай Сандровпа курнăçма тӳр килчĕ. Хам шухăш-кăмăл çинчен каласа патăм ăна, сăвăри йĕркесене сулмаклăрах, илемлĕрех, шухăшлăрах тума май килмест-ши, терĕм. Талăк та иртмерĕ, поэт ман пата вĕçтерсе те çитрĕ. Сăвă хатĕр. Вăл, Петр Ялкирăн хушса юрламаллине çаплах хăварса, ытти куплечĕсене çĕнетсе лайăхлатнă. Пысăк çĕкленӳпе кĕвĕ çыра пуçларăм. Эрнерен юрă шăранса та тухрĕ. Мефодий Ивановича кăтартса пăхрăм, композиторсене те паллаштартăм. Пурте кăмăлларĕç.

Каярахпа эпĕ ăна хор валли те йĕркелерĕм. Чăвашрадио хорĕ юрра хăй репертуарне кĕртрĕ. «Хăмла пахчи» радиопа янăраса кайрĕ. Итлекенсем çырусем çырчĕç, ăна çине-çинех пама ыйтрĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ, «Хăмла пахчине» художество пултарулăх коллективĕсем, уйрăм солистсем юрлама тытăнчĕç. Çапла вăл халăх хушшине анлăн сарăлчĕ. 1965 çул — «Хăмла пахчи» юрă çуралнă çул. Унтанпа 14 çул иртрĕ, юрă çав-çавах çунатне усмасть, ăна концертсенче те, уяв кĕрекисенче те юрлаççĕ.